Мăн куна кĕтсе илни

Н.И. АДИДАТОВА, *Патăрьел районĕнчи Шăхачри пуçламăш шкул – ача сачĕн директорĕ*

Халăх малашлăхĕ, унăн ăс-хакăл аталанăвĕ çамрăк ăру çав халăхăн пĕр пайĕ пулнине чĕререн туйса-ăнланса тăнинчен килет. Ачасем мĕн пĕчĕкрен чăвашлăха туйса ÿсмеççĕ пулсан халăхăн çутă пуласлăхĕ иккĕленÿллĕ.

Несĕлсем пире валли пуян халал хăварнă. Вĕсем кашни çыннăн ăшĕнче (ăс-тăн, кăмăл-сипет, сапăрлăх тĕлĕшĕнчен) çирĕп шăнăр аталантарнă. Ача мĕн пĕчĕкрен Православи йăли-йĕркине хутшăнни çынлăха тытса тăракан тымара вăй илме май панă.

Юлашки вăхăтра самана самай улшăнчĕ. Халăхсен хăйне евĕрлĕхĕ иксĕлет. «Халăх вĕрентĕвĕн пуянлăхне упраса аталантарса пырсан çеç чăваш çĕнĕрен чĕрĕлсе малалла кайма пултарать, тĕнчери ытти халăх йышĕнче тивĕçлĕ вырăна тухать, ĕмĕрхи чапне çĕнĕ шая çĕклеме шанчăк тупать», – тет педагогика ăслăлăхĕсен докторĕ Г.Н. Волков.

Ăруран ăрăва куçакан йăла-йĕркепе пепкесене паллаштарас ĕçре ача сачĕн тÿпи пысăк.

Пирĕн, Патăрьел районĕн «Шăхачри пуçламăш шкул–ача сачĕ» муниципалитетăн пĕтĕмĕшле вĕренÿ бюджет учрежденийĕнче çак ĕçе питĕ тимлеççĕ. Раштава, Пукрава, Кăшарние, Мăн куна, Çимĕке уявласси йăлана кĕнĕ.

Паян манăн Мăн кун умĕн аслă ушкăнри ачасемпе ирттерекен уяв сценарийĕпе паллаштарас килет.

Мăн кун уявĕ

Пÿрт ăш-чикĕ. Анюк аппа кăштăртатса çÿрет, уяв сĕтелĕ хатĕрлет. Сĕтел çинче чашăкпа хĕрлĕ çăмарта, кулич тата пĕремĕк-канихвет. Асанне хуллен калаçать. Анюк аппа та, ачасем те чăваш тумтирĕпе.

А н ю к а п п а. Мăн кун, Мăн кун çитрĕ. Уявсен уявĕ. Чи çутă уяв, чи савăнăçлă уяв. Чун-чĕрене шăнăçайми уяв – Христос чĕрĕлнĕ! Чăн чĕрĕлнĕ! Паянхи Аслă кун хĕвелĕ те ташласа тухать тени ахаль мар – чăнах та, ташласа тухрĕ вăл паян. *(Алăка шаккани илтĕнет.)* Ачасем килчĕç пулмалла. *(Алăк патнелле пырать.)* Кĕрĕр! Кĕрĕр!

Х ĕ р а ч а. Христос чĕрĕлнĕ, Анюк аппа!

А н ю к а п п а. Ай, хĕрĕм, кĕрех, кĕр. Эсĕ чи малтан пирĕн пÿрте кĕтĕн. Халĕ ĕнтĕ кăçал ĕне те тына пăруласа парĕ, сурăхĕ те путек тăвĕ. Ай телей, вăт телей! Кил-ха, сана тĕк минтер çине лартам. (*Кравать çинчен минтер илсе тенкел çине хурать те хĕр ачана лартать.*) Çи-ха, çи-ха, астивсе пăх! (*Пĕçернĕ çăмарта парать.)* Чăххи-чĕппи, хур-кăвакалĕ ăнса пулччăр тетĕп-çке.

Алăка шакаççĕ. Ачасем чăваш халăх юррине «И кăтик те кăтик» юрласа кĕреççĕ.

А ч а с е м. Христос чĕрĕлнĕ!

А н ю к а п п а. Чăн чĕрĕлнĕ! *(Анюк аппа ачасене ларса тухма сĕнет.)* Вырнаçăр, ачамсем. Мĕнле хавас эп сире!

П ĕ р р е м ĕ ш а ч а *(ура çине тăрса).*

Çанталăк ăшă кунсерен,
Тăван тавралăх чĕрĕлет.
Уяв пуçланчĕ килсерен,
Кашни çурта Мăн кун кĕрет.

И к к ĕ м ĕ ш а ч а *(малалла тăсать).*

Чан сасси илтĕнет ир-ирех,
Мăн кун килсе çитрĕ каллех.
Вĕр çĕнĕ шурă кĕпе тăхăнса
Тухрăм эпĕ урама савăнса.

В и ç ç ĕ м ĕ ш а ч а.

Мăн кун, Мăн кун терĕмĕр,
Мăн кун уявĕ çитрĕ те.
Мăн кун пăтти çийĕпĕр,
Çăмарта ас тивĕпĕр.

А н ю к а п п а. Эх, каçарăр, ачасем, тÿрех сĕтел хушшине ларма сĕнменшĕн. Иртĕр, иртĕр! (*Анюк аппа ачасене сĕтел хушшине вырнаçтарать.)* Чи тутлă апат-çимĕç хатĕрлесе лартас килет Мăн кун сĕтелĕ çине. Эсир юратакан пылак çимĕç те туянтăм. Вăл кучченеçе эсир кирек хăш кун та астивме пултаратăр. Мăн кун апатне сĕнем-ха сире. Акă Мăн куна ятарласа пĕçернĕ пылак кулач (кулич), акă тăпăрчăран пĕçернĕ çимĕç, акă хĕретнĕ çăмарта. Паян хĕретнĕ

çăмарта кашнин сĕтелĕ çинче пур. Мĕншĕнне те пĕлетĕр пулĕ.

П ĕ р р е м ĕ ш а ч а. Эпĕ пĕлместĕп.

И к к ĕ м ĕ ш а ч а. Эпĕ те.

В и ç ç ĕ м ĕ ш а ч а. Тем, эпĕ те лайăх астумастăп. Каласа пар, Анюк аппа.

А н ю к а п п а. Хаваспах каласа паратăп, итлĕр. Пĕрремĕш хут «Христос чĕрĕлнĕ» тесе çăмарта парнелени епле пулса иртни çинчен акă мĕнле калаççĕ.

Иисус Христос çĕр çинче пурăннă чухне унăн вĕренекенĕсем пулнă – апостолсем. Вĕсен хушшинче – Мария Магдалина ятлă хĕрарăм та. Иисус Христоса хĕрес çине пăталаса вĕлернĕ хыççăн Вăл чĕрĕлсе тăнă тенĕ хыпара пĕрремĕш ун тупăкĕ патне мирра йăтса пыракан Мария Магдалина тата унпа пĕрле пулнă хĕрарăмсем илтнĕ. Таса сăваплă хĕр Мария Магдалина, Христосăн ытти вĕренекенĕсем пекех, тĕрлĕ çĕр-шыв тăрăх çӳренĕ. Вăл Рима та çитнĕ. Тиберий император патне вара çынсем пушă алпа кĕмен. Пуян та тĕреклисем – ылтăн-кĕмĕлпе, чухăннисем вара кам мĕн пултарнă çавна сĕннĕ, чăх çăмарти те пулин панă. Мария Магдалинăн вара Христоса – этемлĕхе Çăлакана çирĕп те тарăн ĕненнисĕр пусне нимĕн те пулман. Вăл Тиберий императора чăх çăмарти тăсса парса: «Христос чĕрĕлнĕ», – тенĕ.

Император ĕненмен. «Пулма пултараймасть! Вилни чĕрĕлни хăçан пултăр? Маларах шурă чăх çăмарти куç умĕнчех хĕрелсе ларĕ», – тенĕ вăл. Çак сăмахсене каланă хыççăнах ун аллинчи шап-шурă çăмарта хĕпхĕрлĕ пулса кайнă...

Паянхи кун, Иисус Христос чĕрĕлсе тăнă кун, эпир пĕр-пĕрне хĕрлĕ çăмарта сĕнсе: «Христос чĕрĕлнĕ», – тетпĕр. Илекенĕ вара: «Чăн чĕрĕлнĕ», – тесе хуравлать. Христосăн вĕренекенĕсем пĕр-пĕрне çапла саламлама пуçланă.

Анюк аппа кашни ачана «Христос чĕрĕлнĕ» тесе çăмарта сĕнет. Ачасем «Чăн чĕрĕлнĕ» тесе илеççĕ.

А н ю к а п п а. Паянхи кун хурланма, кулянма каламан. Паян çултталăкăн чи савăнăçлă кунĕ. Кашниех хăйĕн савăнăçне теприн пайлатăр – унра çак кăмăл вăй илсе пырĕ. Выляр, юрлар паян! (*Анюк аппа ачасене вылямa йыхăрать.*) Çамрăк чух çăмартасемпе тĕрлĕ вăйă выляттăмăр.

«Çăмарталла» вăйă выляççĕ. Ачасем пĕр-пĕрне хирĕç икшерĕн тăраççĕ. Вĕсем хушшинче урайĕнче – симĕс пир. Ачасем çак пир тăрăх ик енчен кашни хăй çăмартине кустарса яраççĕ. Çăмартасем тĕлме-тĕл пулчĕç пулсан вĕсен хуçисем пĕрне-пĕри ыталаса Мăн кунпа саламлаççĕ.

А н ю к а п п а. Ачасем, эсир питĕ маттуррине куратăп-ха. Юрлама та, сăвă калама та, вылямa та ăста. Сирĕн тавçăрулăха тĕрĕслем-ха. Турă пире ку енчен те кӳрентермен. Эпĕ сире тупмалли юмахсем парăп. Тупсăмĕсене пĕлĕр-ши?

1. Çиелте пăр, аялта пăр, варринче – пыл.

2. Çĕнĕ пӳртре такам пур, тухнă чух ишĕлсе анать.

3. Шурă пӳрт нумай, ниçтан кĕме алăк çук.

Ачасем хуравлаççĕ.

А н ю к а п п а. Маттур, ачасем. Анчах та пĕрремĕш тупмалли юмах сире самай хытă шутлаттарчĕ. Мĕнле сăнарлă каланă çăмарта çинчен. Калăр-ха, тата камăн чăххи сар çăмарта тунă тет?

П ĕ р р е м ĕ ш а ч а. Сармантейĕн.

А н ю к а п п а. Ачасем, çак юмаха аса илер-и?

И к к ĕ м ĕ ш а ч а. Эпĕ сарă чăх пулатăп.

В и ç ç ĕ м ĕ ш а ч а. Эпĕ Сармантей.....

Ачасем юмахри рольсемпе килĕшӳллĕн тум тăхăнаççĕ, юмаха спектакль пек выляççĕ.

А н ю к а п п а. Чăннипех те савăнтартăр – юмаха та çитсе килтĕм. Эсир ташлама та ăста мар-и-ха?

Ачасем чăваш ташши «Линкка-линкка» ташлаççĕ.

П ĕ р р е м ĕ ш а ч а. Ачасем, айтăр паттăрла вылятпăр! Кам паттăр пулать?

И к к ĕ м ĕ ш а ч а. Айтăр выляр! Эпĕ паттăр! Эпĕ!

В и ç ç ĕ м ĕ ш а ч а. Çук, эпĕ!

А н ю к а п п а. Эп сире пĕлмен пулсан: «Ну, кусем вăрçăнсах каяççĕ ĕнтĕ», – теттĕм. Эсир вăрçăнакансем маррине пĕлетĕп. Сирĕн вăйăа хаваспах сăнăп.

П ĕ р р е м ĕ ш а ч а. Ачасем, ахалех тавлашса тăрар мар. Малтан çĕмĕрсе пăхар. Кам паттăр пулать, çавна ĕç хушăпăр.

А ч а с е м (*харăс*). Килĕшетпĕр!

Ачасем çăмарта çĕмĕрмелле выляççĕ.

П ĕ р р е м ĕ ш а ч а. Ман çăмарта çĕмĕрĕлмерĕ. Эпĕ паттăр!

В и ç ç ĕ м ĕ ш а ч а. Ачасем, паттăра мĕнле ĕç хушăпăр?

И к к ĕ м ĕ ш а ч а. Вăл чăвашла питĕ хитре ташлать. Айтăр ăна ташлаттарар! Эпир юрлăпăр.

Ачасем чăваш халăх юрри «Чăн тӳпере» шăрантараççĕ.

А н ю к а п п а. Эсир мана хăвăр пултарулăхăрпа питĕ савăнтартăр. Паянхи кун çынсем тăванĕсем, пĕлĕшĕсем патне хăнана çӳреççĕ, савăнаççĕ, пĕр-пĕрне парнесем параççĕ. Мăн кун çăмарти тыттараççĕ. Эпĕ те сире юнашар ушкăнрисене кучченеçпе савăнтарма сĕнесшĕн. Кайран вара урама чуччу ярăнма тухăпăр. Мĕн калăр?

Ачасем килĕшеççĕ. Хăнана пуçтарăнаççĕ. Ачасемпе хăнара тĕрлĕ вăйă выляма пулать: «Çăмарта çаварттарни» (пĕçерни, пĕçерменни); «Чи ăста асамçă» (çăмарта илемлетесси); «Çăмарта кустарасси» (хăшĕн инçерех кусать).